27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ФЕВРАЛЬ 25 ВЫРСАРНИКУН 37(1788) №

# ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

## СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитетĕнче

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çакна палăртаççĕ: колхозсемпе МТС-сем тата совхозсем, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах, 1944 çулта суракине кĕске срокcенче тата пахалăхлăн туса ирттерчĕç, тырпулсене кал-каллăнрах пухса кĕртрĕç, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерчĕç, çакă вара тырпулсен пĕтĕм хисепне ÿстерме тата государствăна тĕштырă, çĕрулми, пахча-çимĕçсем, сахăр кăшманĕ, çĕрмамăкĕ, йĕтĕн-кантăр, çу тумалли тата ытти тĕрлĕ ялхуçалăх культурисем ытларах хатĕрлесе пама май пачĕ.

Çав çитĕнÿсене ялхуçалăхĕ колхоз хресченĕсемпе совхозсенчи рабочисен ĕçри активлăхне ÿстернипе, çавăн пекех тата машинно-тракторнăй станцисен ĕçне лайăхлатнипе тума пултарчĕ.

«Хĕрлĕ Çар вăрçăн тăватăмĕш çулĕнче те, колхоз хресченĕсем тăрăшнипе пулăшать, апат-çимĕç çитменнине курмасть. Колхозниксемпе колхозницăсем—рабочисемпе интеллигенцие апат-çимĕç, промышленноçа вара—чĕртавар парса тăраççĕ, фронт валли хĕçпăшалсемпе снаряжени туса кăларакан заводсемпе фабрикăсене йĕркеллĕ ĕçлеме май параççĕ. Пирĕн колхоз хресченĕсем, Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне пĕтĕмĕшпех ăнланса тăрса, тăшмана çĕнтерес ĕçре Хĕрлĕ Çара активлăн пулăшаççĕ» (Сталин). СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозниксен патриотла пысăк çĕкленĕвне тата вĕсем нимĕç захватчикĕсене пуçĕпех çапса аркатас ĕçре Хĕрлĕ Çара пулăшса тăнине уйрăмах пысăка хурса палăртаççĕ. Çав çĕкленÿпе пулăшу акă мĕнре курăнса тăрать: нумай облаçсемпе республикăсенчи колхозсем, нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Украинăри колхозниксем пуçарнипе, 1944 çулта Хĕрлĕ Çарăн Главнăй Командованийĕн фондне, çирĕплетнĕ хатĕрлев планĕсенчен ирттерсе, тырпулпа çĕрулми тата ытти тĕрлĕ çимĕçсем нумай пачĕç.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ялхуçалăхне юсаса ура çине тăратас тата малалла ÿстерес ĕçре Мускав, Калинин, Иваново, Ярославль, Архангельск, Киров, Вологда облаçĕсенчи, çавăн пекех тата нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Украина, Белорусси, Молдаван ССР-ĕсенчи, Курск, Орел тата Брянск облаçĕсенчи партипе совет вырăнти организацийĕсем, колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем чылай пысăк çитĕнÿсем тунине палăртаççĕ. Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсем, ялхуçалăхне нимĕç захватчикĕсем çав тери пысăк сиен кÿнине пăхмасăрах, суракин планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç, тырпулсене лайăх пăхса çитĕнтерсе ăнăçлăн пухса илчĕç, тĕштырăпа техникăллă культурăсен тухăçлăхне ÿстерчĕç, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене пурнăçларĕç.

Кунпа пĕрлех СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çакна палăртаççĕ: хăшпĕр облаçсемпе крайсенчи тата республикăсенчи, уйрăмах Алтай крайĕнчи, Новосибирск, Куйбышев, Ульяновск облаçĕсенчи, Мордвапа Тутар АССР-ĕсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсем 1944 çулта ялхуçалăх ĕçĕсен планне пурнăça кĕртеймерĕç, çавăн пекех тата уйхир ĕçĕсене кирлĕ пек пахалăхлăн туса ирттермерĕç, тырпул тухăçлăхне ÿстерес тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парас тĕлĕшпе тунă заданисене пурнăçа кĕртеймерĕç.

Çĕпĕрти, Уралти, Кăнтăр-Хĕвелтухăçĕнчи тата Казахстанри республикăсемпе крайсен тата облаçсен партипе совет тата çĕрĕç органĕсем акмалли çĕр лаптăкĕсене чакарса янă, уйрăмах çав районсенче пахă продовольстви культури пулса тăракан çурхи тулă акассине чакарса янă.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозсен, МТС-сен, совхозсен, çĕрĕç органĕсен, партипе совет организацийĕсен 1945 çулхи тĕп задачи—тырпулсен тухăçлăхне пур майсемпе те ÿстересси, пухса илекен тĕштырăсен тата ытти ялхуçалăх продукчĕсен пĕтĕм хисепне ÿстересси пулса тăрать тесе шутлаççĕ.

Çав задачăна ăнăçлăн татса парас тесе, партипе совет организацийĕсем колхозсемпе МТС-сем тата совхозсем çакă чи кирлĕ мероприятисене пурнăçлас тĕлĕшпе вăй хурса ĕçлеме тивĕçлĕ:

Государствăн суртырисем акмалли планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртме колхозсемпе МТС-сене тата совхозсене çуракине вăхăтра хатĕрлесе çитермелле, уйхир ĕçĕсен пахалăхне ÿстермелле, мĕнпур йышши ялхуçалăх культурисене акса тăвас ĕçĕн агротехникине лайăхлатмалла тата пуринчен малтан, тăпрана лайăх хатĕрлесе çитерсе, суртырисене вăхăтра акса хăварасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, акасса лайăх вăрлăх акмалла, шăтнă тырпулсене кирлĕ пек пăхса ÿстермелле.

1945 çулта ССР Союзĕн мĕнпур районĕсенче кĕрхи тырăсем акма çĕртме сухи тăвас тата çĕртме пуссине лайăх капкалатса çемçетес тĕлĕшпе панă заданисене пурнăçласси çине, хĕвелтухăçĕнчи районсенче вара çурхи тулă акмалли çĕре çĕртме туса çемçетес тĕлĕшпе панă заданисене пурнăçласси çине, çавăн пекех тата колхозсемпе совхозсенче кĕрхи çĕртме тумалли плана пурнăçласси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхас пулать.

Колхозсемпе МТС-сенчи тата совхозсенчи тракторсемпе ялхуçалăх машинисене тата чĕрĕ туртăм вăйне вăхăтра хатĕрлесе çитермелле, трактористсемпе комбайнерсене, механиксене, трактор бригадисен бригадирĕсене вĕрентсе хатĕрлемелле, колхозсенчи бригадăсене çирĕплетмелле, звеносен ĕçне лайăхлатмалла, ĕçе тата продукцие шута илессине йĕркене кĕртмелле, çавăн пекех тата республикăсемпе крайсенчи, облаçсенчи промышленность предприятийĕсенче тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем туса кăларассине пур енĕпе те ÿстермелле.

Ялхуçалăх культурисене районсемпе колхозсем тăрăх, çутçанталăк тата экономика условийĕсене (туртăм вăйĕпе ĕç вăйĕ мĕн чухлĕ пуррине, чĕртавара ĕçлесе тăвакан предприятисем пуррине) шута илсе, тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе колхозсемпе совхозсене заданисем парас ĕçе тĕрĕс план туса палăртмалла, пăсăлнă пусуçаврăнăшĕсене юсаса йĕркелемелле, çĕнĕрен пусуçаврăнăшсем тумалла, ялхуçалăх культурисене вĕсем умĕн акнă культурăсем тăрăх пусуçаврăнăшĕнче тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла; тĕштырăсен, техникăллă культурăсен, пахча-çимĕçсемпе курăксен сортлă вăрлăхĕсене акса тăвас ĕçе лайăхлатмалла.

МТС-семпе колхозсене тата совхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен пур енĕпе те малалла çирĕплетсе пымалла, тырпул акса тума тивĕçлĕ çĕр лаптăкĕсене пурне те акса хăвармалла, колхозсенче çĕрпе усă курассине йĕркене кĕртмелле, сортлă вăрлăхсем акса тăвас тата районсем тăрăх йышăннă сортсене акса тăвас ĕçе юсаса йĕркене кĕртмелле, çавăн пекех тата нумай çул ÿсекен курăксем акассине, уйрăмах нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенче, сармалла.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ промышленность Наркомачĕсене тракторсемпе ялхуçалăх машинисем, вĕсем валли запаслă пайсем, лашапа тата алăпа ĕçлемелли инвентарьсем, удобренисемпе химикатсем туса кăлармалли плансене, çавăн пекех тата ялхуçалăхĕ валли нефть продукчĕсем турттармалли тата çав продуктсене парса тăмалли плансене пĕр сăмахсăрах пурнăça кĕртме хушаççĕ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çапла йышăнчĕ:

### I

### ЯЛХУÇАЛАХ ĔÇĔСЕН ПЛАНĔ ÇИНЧЕН

1. 1945 çулта мĕнпур ялхуçалăх культурисем акмалли плана пĕтĕм ялхуçалăхĕ тăрăх, 1944 çулхипе танлаштарсан, 8,1 миллион гектар ÿстерсе, вăл шутра колхозсем тăрăх 5,9 миллион гектар чухлĕ, совхозсемпе подсобнăй хуçалăхсем тăрăх 0,6 миллион гектар чухлĕ ÿстерсе, çирĕплетес.

2. Колхозсемпе совхозсенче, промышленность Наркомачĕсен подсобнăй хуçалăхĕсенче тата хресчен хуçалăхĕсенче 1945 çулта çурхи тырăсем акмалли плана, 1946 çул валли кĕрхи тырăсем акмалли плана, агротехникăллă ĕçсен планне, МТС-сенчи трактор ĕçĕсен планне, тĕштырăсемпе техникăллă культурăсем тата çĕрулми туса илмелли плана, пахча-çимĕç культурисемпе выльăх апачĕ валли акакан тымарçимĕçсен вăрлăхĕсене туса илмелли плана, нумай çул хушши ÿсекен тата пĕр çул хушши ÿсекен курăксене вăрлăхлăх уйăрса хăвармалли плана, улăх ути çулса пухмалли тата силос хывмалли плана, çырла-çимĕçсемпе виноград йывăççисем лартса тумалли плана республикăсемпе крайсем тата облаçсем тăрăх çирĕплетес.

3. Уралти, Çĕпĕрти, Атăл тăрăхĕнчи тата Казах ССР-ĕнчи колхозсенче çеремсене, нумай çул акмасăр выртнă çĕрсене сухаласа çурхипе кĕрхи тырăсем акмалли плана çирĕплетес.

4. 1945 çул валли МТС тракторĕсемпе сухаланă çĕрĕн кашни гектарĕн хăйне лакакан хакне, çемçе суха çине куçарса шутласан, 39 тенкĕ чухлĕ çирĕплетес, вăл шутра тракторсемпе комбайнсене тата ытти ялхуçалăх машинисене капитальнăй тата текущи ремонт тунă çĕре тухакан расходсене 8 тенкĕ чухлĕ çирĕплетес.

СССР Финанс Халăх Комиссариатне (Зверев юлташа), кунсăр пусне, 1945 çулхи бюджет тăрăх МТС-сен сурчĕсемпе оборудованийĕсене капитальнăй ремонт тунă çĕре 42 миллион тенкĕ расходламалла туса палăртма хушас.

Латви, Литва тата Эстони ССР-ĕсенчи МТС-сем çумĕнчи машинăсемпе лашасен куçса çÿрекен пунктĕсенче ĕçлекен работниксене ĕçукçи пама СССР Наркомземĕн пĕтĕмĕшлĕ смети шутĕнчен СССР Наркомземне 1945 çулта 11,6 миллион тенкĕ расходлама ирĕк парас.

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, юсав ĕçĕсем валли тухакан расходсен çирĕплетнĕ висенчен тухмасăр, 1945 çулта тракторсемпе комбайнсене тата ытти ялхуçалăх машинисене юсама укçа-тенкĕ памалли нормăсене облаçсем, крайсем, республикăсем тăрăх уйрăмшарăн палăртса хума ирĕк парас.

5. Латви, Литва, Эстони ССР-ĕсенчи тата Украина, Белорусси, Молдаван ССР-ĕсен хĕвеланăç районĕсенчи хресчен хуçалăхĕсенче ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттермелли плана çирĕплетес.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ Латви, Литва, Эстони ССР-ĕсенчи, çавăн пекех тата Украина, Молдаван, Белорусси ССР-ĕсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсене çуракине хатĕрленес тата ăна туса ирттерес, ытти тĕрлĕ ялхуçалăх ĕçĕсене пурнăça кĕртес тĕлĕшпе хресчен хуçалăхĕсене организациллĕ-производствăллă пулăшу пама, çавăн пекех тата машинно-тракторнăй станцисене юсаса йĕркелеме, машинăсемпе лашасен куçса çÿрекен пунктĕсен ĕçне организацилеме хушас.

6. СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне, республикăсен Совнаркомĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене тата совхозсемпе подсобнăй хуçалăхсем тăрăх ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттерес тĕлĕшпе план панă Наркоматсене çапла тума хушас:

а) çак постановленире республика, край тата область валли çирĕплетнĕ государство планĕ тăрăх 1945 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсемпе трактор ĕçĕсем тĕлĕшпе тунă заданисене районсем, совхозсемпе МТС-сем, колхозсемпе колхозниксем тата хресчен хуçалăхĕсем патне вунăкунлăх срокра çитермелле;

б) çак постановленипе пăхса хунă тĕштырă культурисен вăтам тухăçлăхĕ тăрăх уйрăм тĕштырă культурисен тухăçлăхĕ тĕлĕшпе заданисем çирĕплетмелле, çавăн пекех тата çак постановленипе пăхса хуман техникăллă культурăсен, пахча-çимĕçсен, выльăх апачĕ валли акакан культурăсен тата çырла-çимĕçсен тухăçлăхĕсем тăрăх заданисем палăртса хумалла;

в) парниксем тумалли, вăрман лартмалли, пурçăн хурчĕ ĕрчетмелли, субтропикăри ÿсен-тăрансемпе чей курăкĕсем лартса тумалли, улăхсемпе çарансене лайăхлатмалли плансене çирĕплетмелле;

г) районсемпе колхозсем валли шăваракан çĕрсем çинче мĕн чухлĕ тырă акмалли тата тырпул туса илмелли заданисене çирĕплетмелле, шăварса тăракан çĕрсемпе пĕтĕмĕшпех усă курмалла тăвас пулать;

д) плансене районсемпе колхозсем патне çитернĕ хыççăн ялхуçалăх культурисене йышăннă пусуçаврăнăшĕсем тăрăх тата çав пусуçаврăнăшсем çине куçмалли план тăрăх, çавăн пекех тата ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ мĕн чухлĕ пуррине шута илсе, вырнаçтарса тухмалла, çак ĕçе туса ирттернĕ чухне уйрăм колхозсене техникăллă тата пропашной культурăсем нумай парса тултармалла мар.

### II

### ÇУРКУННЕХИ УЙХИР ĔÇĔСЕНЕ ХАТĔРЛЕНЕССИ ÇИНЧЕН

1. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ советпа парти тата çĕрĕç органĕсене çураки ĕçĕсене тумашкăн колхозсемпе МТС-сене тата совхозсене вăхăтра хатĕрлесе çитерме, суракине агротехникăн чи лайăх срокĕсенче, пахалăхлăн тата организованно туса ирттерме хушаççĕ.

МТС-сен тĕп задачи—машинăсемпе тракторсен паркĕпе усă курас ĕçе малалла лайăхлатасси, трактор ĕçĕсен пахалăхне ÿстересси тата колхозсем умĕнчи производствăллă обязательствăсене агротехника кăтартнă срокcенче пурнăçа кĕртесси пулса тăрать, тесе палăртас.

2. СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне, республикăсен Совнаркомĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене, союзлă республикăсенчи Компартисен Центральный Комитечĕсене, ВКП(б) крайкомĕсемпе обкомĕсене çаксене пурнăça кĕртме хушас:

а) кашни МТС-па совхозра тракторсемпе трактор инвентарьне вăхăтра та тĕплĕн юсаса çитермелле, çавăн пекех тата кашни колхозпа совхозра лашапа ĕçлемелли инвентаре, транспортпа кÿлмелли хатĕрсене юсаса хатĕрлемелле.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене тата ĕç хатĕрĕсене юсас ĕçре МТС-сене, колхозсене, совхозсене пулăшма хуласенчен ремонт бригадисем ямалла, металлпа топливо уйăрса памалла.

Юсанă тракторсене государство комиссийĕсем йышăнмалла. Çав комиссисен составĕнче райисполком председателĕ е ВКП(б) райкомĕн секретарĕ (комисси председателĕ), МТС е совхоз директорĕпе старши механикĕ, кÿршĕри МТС-ăн е совхозăн старши механикĕ, çавăн пекех тата çирĕплетсе панă тракторпа ĕçлекен старши тракторист пулмалла;

б) ялхуçалăх ĕçĕсем пуçланиччен кашни МТС çурхи уйхир ĕçĕсене тума мĕнле хатĕрленсе çитнине государство комиссийĕсен тĕрĕслесе тухмалла. Çав комиссисен составĕнче райком секретарĕ, райисполком председателĕ, районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ тата урăх МТС-ăн директорĕ пулмалла. Тĕрĕслесе тухнă чухне трактор бригадисене организациленĕ çĕрте кадрсене мĕн чухлĕ тĕрĕс вырнаçтарса тухни çине, тракторсем çумне кăкарса ĕçлемелли тата тракторсене горючипе çу ямалли инвентарьсем, инструментсем, юсавлă пичкесемпе витресем, запаслă пайсем бригадăсене çителĕклĕ таран тупса панипе памалли çине тата МТС тракторсене уйхирте техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăма мĕнле хатĕрленсе çитни çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла;

в) яланлăха çакăн пек йĕрке тăвас: çĕнĕрен вĕрентсе хатĕрленĕ трактористсене вĕсем уйхир ĕçĕсенче, старши тракторист ертсе пынипе, виçĕ эрне хушши ĕçленĕ хыççăн кăна хăйсем тĕллĕн ĕçлеме уйăрса лартмалла.

Трактористсене çурхи уйхир ĕçĕсем пуçланиччен те, çавăн пекех уйхир ĕçĕсем пĕтсен те техника тĕлĕшĕнчен малалла вĕрентсе пырасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, çак ĕçре кашни тракториста уйрăмшарăн вĕрентес майсемпе анлăн усă курмалла;

г) çурхи уйхир ĕçĕсем пуçланиччен тракторсене заправка тумалли урапасене, вĕсем çитмеççĕ пулсан, çĕнĕрен туса хатĕрлемелле, кашни трактор бригадине заправка тумалли инвентарь, инструментсем тата тракторсемпе ялхуçалăх машинисене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăма кирлĕ ытти хатĕрсем çителĕклĕ таран тупса памалла;

д) трактор бригадисенче вырăнти строительство материалĕсенченех трактористсемпе колхозсен вăйĕпе тракторсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăма кирлĕ çăмăл мастерскойсемпе лупасайсем тăвас ĕçре тата бригадăра горючи сыхласа усрамалли çăмăл пÿхрепсем тăвас ĕçре малта пыракан трактор бригадисемпе колхозсем кăтартса панă опыта анлăн сармалла;

е) МТС-сем колхозсемпе тунă договорсем тăрăх, 1945 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр, кашни трактор бригади валли трактор ĕçĕсен çулталăкри заданине палăртса хумалла, çав плансенче колхозсенче тракторсемпе мĕнле ĕçсем тăвассине тата вĕсене хăçан пурнăçлассине кăтартса памалла, çурхи уйхир ĕçĕсен тапхăрĕ валли ĕç планĕсем тумалла, çавăн пекех тата тракторсемпе ытти тĕрлĕ ялхуçалăх машинисене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăмалли графиксене ялхуçалăх ĕçĕсен тапхăрĕсем тăрăх палăртса памалла.

3. Машинно-тракторнăй станцисен ĕçĕнчи обезличкăна пĕтерес тата колхозсен уйхирĕсене тракторсемпе сухаласа çемçетес ĕçĕн пахалăхне ÿстерес шутпа, парти райкомĕсене, райисполкомсене тата МТС-сен директорĕсене çураки пуçланиччен трактор бригадисене пысăк колхозсенче план тенĕ пекех, уйхир бригадисем çумне, пысăк мар колхозсенче ĕçленĕ чухне вара —пĕр колхоз çумне е темиçе колхоз çумне ялхуçалăх ĕçĕсен мĕнпур тапхăрĕ валли çирĕплетсе хума хушас.

4. Уйхир ĕçĕсене хăвăртрах туса ирттерес тата тракторсемпе усă курассине лайăхлатас ĕçре трактористсене хавхалантарас шутпа, çапла тăвас:

а) çуракинче 15 кунлăх заданисене пурнăça кĕртнĕшĕн трактористсене премисем памалли йĕркене 1945 çул валли та сыхласа хăварас;

б) çурхи акан малтанхи ултă кунĕ хушшинче трактористсене ĕçукçисем икĕ хут ÿстерсе памалли йĕркене тата çав вăхăт хушшинчех горючи расходламалли нормăна 10 процент чухлĕ ÿстермелли йĕркене сыхласа хăварас.

5. Республикăсен Совнаркомĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене, райисполкомсемпе МТС-сен директорĕсене çапла тума хушас:

а) МТС-ăн нефть хуçалăхĕнче тата нефть продукчĕсене хураллаcа тăрас ĕçре çирĕп йĕрке тумалла, нефть продукчĕсене салатса пĕтерме тата вĕсене ытти тĕрлĕ хуçалăх ыйтусем валли законсăр расходлама хăтланнисене чарса лартмалла;

б) МТС-сем валли çурхи шывшур пуçланиччен горючи турттарса хумалла, МТС-сене çак ĕçре хула транспорчĕпе пулăшмалла, çавăн пекех ялхуçалăх продукчĕсем турттарнă çĕрте ĕçлекен автомобильсемпе тата колхозсен лашисемпе, вĕсем каялла таврăннă чухне, усă курмалла.

6. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозсемпе совхозсенче 1945 çулта çирĕплетнĕ ака планне пĕтĕмĕшпех пурнăça кĕртме май паракан хисеп чухлĕ вăрлăх фончĕсем уйăрса хăварса, вĕсене тасатса хурасси чи кирлĕ ĕç пулса тăрать тесе шутлаççĕ тата облаçсемпе крайсенчи, республикăсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсене çапла тума хушаççĕ:

а) çурхи уйхир ĕçĕсем пуçланиччен кашни колхозра çирĕплетнĕ çураки планне пурнăçа кĕртме кирлĕ таран тĕштырă, техникăллă культурăсен, пахча-çимĕçсен, выльăх апачĕ валли акакан культу-

(Юлашки 2 мĕш страницăра)

## ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитетĕнчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ вырăссен паллă писателĕ, çав тери талантлă сăмах художникĕ, пирĕн Тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕ, СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Алексей Николаевич **ТОЛСТОЙ** вилни çинчен хурланса пĕлтереççĕ.

ССР СОЮЗĔН ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔ

ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.



## Совет Информаци Бюровĕнчен

### ФЕВРАЛĔН 23-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем КЕНИГСБЕРГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшманăн Хĕвелтухăç Пруссири группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, хупăрласа илнĕ унка хĕссе пырса, АРНСТАЙН, ЛИХТЕНФЕЛЬД, ЛИЛИЕНТАЛЬ, ТОЛЬКСДОРФ, ЛИБЕНАУ, ШАЛЬМАЙ ялĕсене туртса илнĕ. Февралĕн 22-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем ку районра 500 нимĕç салтакĕпе офицерне яхăн тыткăна илнĕ.

ПОМЕРАНИРЕ пирĕн çарсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та АРНСВАЛЬДЕ хулипе чугун çул узелне тытса илнĕ.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, пĕр уйăх хушши хупăрласа тăрса вăйлăн çапăçнă хыççăн, çаварса илнĕ тăшман группировкине пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă та февралĕн 23-мĕшĕнче ПОЗНАНЬ хулипе крепоçне—нимĕçсен Берлин енчи оборонин стратегиллĕ паха узелне — пĕтĕмĕшпех туртса илнĕ.

ПОЗНАНЬШЕН çапăçнă чухне фронт çарĕсем 23.000 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Вĕсемпе пĕрле крепость комендантне Маттерн генерал-майора тата унăн штабне тыткăна илнĕ. Çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем — 385, танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем — 32, тупăсем—584, минометсем—177, пулеметсем—4.490, винтовкăсемпе автоматсем—30.000 ытла, бронетранспортерсем—36, автомашинăсем—3.260, мотоциклсем—400, радиостанцисем—21, паровозсем — 193, вагонсем—3.705, лашасем — 990. Тăшманăн вилнисене кăна шута илсен те, 25.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

БРЕСЛАУ районĕнче пирĕн çарсем хулара хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. БРЕСЛАУ хулипе пĕрлешсе ларакан ПАПЕЛЬХОФ, ГРОСС РААКЕ, КЛАЙН РААКЕ, КЛАЙН БИШВИЦ, КЛАЙН МАЗЕЛЬНИТЦ ялĕсене тата хулан кăнтăр пайĕнче 20 квартал туртса илнĕ. Февралĕн 22-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем ку районра нимĕçсен 130 туппине тытса илнĕ, вĕсенчен 80-шĕ питĕ хăватлă тупăсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 22-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 105 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 14 самолетне персе ÿкернĕ.

## СССР Совнаркомĕнче

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тракторсемпе ялхуçалăх машинисене 1945 çулхи январь уйăхĕнче юсамалли плансене пурнăçлас тĕлĕшпе облаçсем, крайсем тата республикăсем хушшинче пынă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухнă. Çак облаçсемпе республикăсем çĕнтернĕ тесе шутласа, çапла йышăннă:

1. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçан памалли премисене çаксене парас:

УССР-ти Сталино облаçне.
УССР-ти Днепропетровск облаçне.
Белорусси ССР-не.
Саратов облаçне.
Крым АССР-не.

2. 1945 çулхи январь уйăхĕнче тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсамалли плана пурнăçа кĕртнĕ çак облаçсемпе республикăсене палăртса хăварас: Ярославль, Горький, Иваново, Свердловск, Ленинград, Смоленск облаçĕсене, Дагестан АССР-не, Казах ССР-ĕнчи Караганда, Кокчетай тата Павлодар облаçĕсене.

## *В. М. Молотов Франци республикин посолне Ж. Катру господина йышăнни*

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов февралĕн 23-мĕшĕнче Франци республикин Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолне Ж. Катру господина йышăннă. Йышăну Ж. Катру господин хăйĕн верительнăй грамотисене çак кунсенче СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председательне парас тĕлĕшпе пулнă.

### ÇĔНĔРЕН 60 АСЛА ШКУЛ УÇНА

Аслă шкулсен хисепĕ ÿсет. Киевпа Саратовра граждансем строительство валли инженерсем хатĕрлекен институтсем уçнă. Харьковпа тата Дон çинчи Ростовра инженерипе строительство институчĕсем уçăлнă. Пенза хулинче индустри институчĕ уçнă. [illegible] уçăлнă индустри институчĕ Уралти металлурги промышленноçĕ валли инженерсем вĕрентсе хатĕрлет. Казан, Ульяновскра, Курганра, Барнаулта, Буденновскра (Ставрополь крайĕ) çĕнĕ ялхуçалăх институчĕсем уçнă.

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Аслă шкул комитечĕ Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа çĕнĕрен 60 аслă шкул уçнă. (ТАСС).

# СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитетĕнче

*Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра.*

рăсен вăрлăхĕсене тата çĕрулми вăрлăхне уйăрса хăвармалла, вăрлăх фончĕсен пахалăхĕпе сыхлăлăхне тĕплĕн контроллесе тăмалла;

б) акма юрăхсăр вăрлăхсене е сортлă мар вăрлăхсене сортлă вăрлăхсемпе улăштарса илмелле;

в) кашни колхозрах пур культурăсем тăрăх та вăрлăх фончĕсене пĕтĕмĕшпех сортласа тасатмалла тата çирĕплетнĕ кондицие çитермелле, çавăн пекех вăрлăхсен шăтас пахалăхне, вĕсен нÿрĕлĕхĕпе тасалăхне, вĕсем чирлипе чирлĕ маррине вăхăтра тĕрĕслесе тухмалла;

г) хĕвелтухăçĕнчи тата çурçĕрти районсенче шăтма пултаракан, анчах шăтас тĕлĕшпе кондициллĕ мар вăрлăхсене Лысенко академик сĕннĕ меслетпе — çавăн пек вăрлăхсене çуркунне иртерех çÿхе сийпе сарса хурса, сывлăшпа хĕвел çинче уçăлтарса типтерлес меслетпе анлăн усă курмалла, çав вăрлăхсен шăтас пахалăхне вара вăрлăхсем тĕрĕслекен лабораторисенче тата тепĕр хут тĕрĕслесе тухмалла.

7. Республикăсен Совнаркомĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, ВКП(б) крайкомĕсемпе обкомĕсене çак ĕçсене пурнăçа кĕртме хушас:

а) уйхир ĕçĕсен мĕнпур тапхăрĕ валли уйхир бригадисем çумне ĕç лашисемпе вăкăрсене çирĕплетсе памалла, бригадăсенче вара уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетсе тухмалла;

б) ĕç выльăхĕсене çурхи уйхир ĕçĕсен тапхăрĕнче тăрантарма кирлĕ таран утăпа концентрациллă апат-çимĕçсем уйăрса çирĕплетсе хумалла;

в) 1945 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр колхозсемпе МТС-сенче тата совхозсенче производство планĕсене туса çитермелле, МТС-семпе колхозсем хушшинче договорсене тумалла, çавăн пекех тата колхозсемпе совхозсенче тата МТС-сенче трактор бригадисемпе уйхир бригадисен ĕç планĕсене те тумалла, çав плансенче бригадăсем, уйрăм колхозниксем тата совхозсенчи рабочисем çумне ĕç хатĕрĕсем çирĕплетессине, колхозниксене тата МТС-семпе колхозсенчи рабочисене уйрăм ĕçсене вырнаçтарса тухассине палăртса хумалла;

г) колхозсем уйхир бригадисем çумне çĕр участокĕсем çирĕплетсе памалла тата çуркуннехи уйхир ĕçĕсем пуçланиччен звеносене хăйсем акма тивĕçлĕ культурăсене акмалли çĕр участокĕсене вырăна тухса уйăрса памалла;

д) уйхир ĕçĕсем пуçланиччен икĕ эрне малтан кашни колхозпа МТС тата совхоз çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухмалла, çак ĕçре пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕслес меслетпе анлăн усă курмалла.

8. Туртăм вăйĕ çителĕксĕр пулсан, колхозсене уйхирти çăмăл ĕçсенче тата транспорт ĕçĕсенче колхозсемпе колхозниксен сĕт сахал паракан ĕнисемпе усă курма сĕнес, çав ĕнесене вара лайăх пăхмалла тăвас пулать. Колхозниксен ĕçе уйăрнă ĕнисемпе, ялан тенĕ пекех, çав ĕнесен хуçисем ĕçлеме тивĕçлĕ.

Колхозниксен ĕнисемпе уйхир тата транспорт ĕçĕсенче ĕçленĕ чухне вĕсем валли кирлĕ таран шултăра апатсем уйăрса памалла.

9. Райисполкомсене, парти райкомĕсене, колхоз правленийĕсемпе совхозсен директорĕсене уйхир ĕçĕсене колхозсенчи тата совхоз территорийĕнчи ĕçлеме пултаракан мĕнпур çынсене — колхозниксемпе вĕсен килйышĕнчи çынсене, совхозсенчи рабочисемпе служащисене тата вĕсен килйышĕнчи çынсене, çавăн пекех колхозра тăман ĕçе юрăхлă ытти çынсене те, промышленноçпа транспортра ĕçлекенсене пуçне те обязательнăй йĕркепе ĕçе явăçтармалла тума хушас.

10. Уйхир ĕçĕсем пуçланиччен пĕр уйăх малтан мĕнпур колхозсене лашасем тĕлĕшпе ĕç повинноçĕнчен хăтарас, СССР Совнаркомĕ ирĕк памасăр, колхозсенчен туртăм вăйне мĕнле те пулин ĕçе мобилизацилеме чарас. Уйхир ĕçĕсем пуçланиччен виçĕ эрне малтан чĕрĕ туртăм вăйне кăптарма тата вăйлăн тăрантарма тăратас пулать. Колхозсенчен чĕрĕ туртăм вăйне законсăр мобилизацилекен çынсене уголовнăй йĕркепе ответ тыттармалла.

Тракторсемпе транспорт ĕçĕнче тата уйхир ĕçĕпе сыхăнман ытти ĕçсенче, МТС-сем валли горючи турттарнисер пуçне, СССР Совнаркомĕ ирĕк памасăр усă курма чарас.

## III.
## ТЫРПУЛ ТУХАÇЛĂХНЕ ÜСТЕРМЕЛЛИ МЕРАСЕМ ÇИНЧЕН

Уйхир ĕçĕсен пахалăхне малалла лайăхлатас тата мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес шутпа, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне, СССР Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариатне, СССР Аш-какайпа Сĕт-çу промышленность Халăх Комиссариатне, вырăнти партипе совет тата çĕрĕç органĕсене, колхозсен правленийĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене çакă питех те кирлĕ мероприятисене пурнăçа кĕртме хушнă:

1. Кашни колхозпа совхозрах çурхи уйхир ĕçĕсем пуçланиччен, агрономсемпе колхоз правленийĕсем, совхозсен директорĕсем тата опытлă колхозниксем пĕрле ĕçлесе, 1945 çулта çуракине ирттермелли тата тырпулсене пăхса тăмалли тĕплĕ агротехникăллă мероприятисем палăртса хумалла.

Çав мероприятисенче пусуçаврăнăшĕпе палăртнă уйхирсенче мĕнпур культурăсене тĕрĕс вырнаçтарса тухассине, пусуçаврăнăшĕсем пулман çĕрте вара кăçал акакан культурăна малтан çав культурăшăн лайăх культура пулнă вырăна акассине, уйхирсене акас умĕн лайăх ĕçлесе çемçетессине тата акана кашни культурăшăн агротехника кăтартнă чи лайăх срокçенче туса ирттерессине, вăрлăха акнă чух тăпрапа лайăх витĕнтерсе хăварассине, вырăнти удобренисемпе туллинрех усă курассине, çумкурăксемпе, ялхуçалăх культурисене сиенлекен хурткăпшанкăсемпе тата чирсемпе кĕрешмелли мерăсене анлăнрах пурнăçа кĕртессине, пахча культурăсене, уйрăмах çĕрмамăкне, сахăр кăшманне, хĕвелçаврăнăшне, йĕтĕн-долгунеца, кантăра, çĕрулмипе пахча-çимĕçсене лайăхрах пăхса çитĕнтерессине палăртса хумалла.

Колхозсем агрономсемпе пĕрле тунă агротехникăллă мероприятисене, çав мероприятисене тунă агроном е тата районри çĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ, совхозсен тăрăх вара трестăн главнăй агрономĕ ирĕк памасăр, пăрахăçа кăларма е улăштарма никама та ирĕк парас мар.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б, Центральный Комитечĕ таса çĕртмепе кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе панă государство планĕсене пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртме кирли çинчен уйрăмах çирĕп асăрхаттараççĕ, çав ĕçсене пурнăçа кĕртмесĕр нумай районсенче вăрçă вăхăтĕнче уйхирсене çумкурăкĕ пусса илнине пĕтерме çук тата тырпул тухăçлăхне кирлĕ пек ÿстерме çук.

2. ССР Союзĕн типĕ çанталăк е çурма типĕ çанталăк тăракан районĕсенчи колхозсемпе совхозсенче пĕр тикĕс вăйлă тырпул туса илмелле тăвас шутпа, çав районсенчи вырăнти советпа парти органĕсене, колхозсен правленийĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене колхозсемпе МТС-сенчи тата совхозсенчи мĕнпур вăйсемпе майсене тăпрара нÿрĕлĕх мĕнле те пулин ытларах пухса тата сыхласа хăварас ĕçе, 1945 çулта колхозсемпе совхозсенче вăйлă тырпул туса илме май паракан агротехникăна пурнăçа кĕртес ĕçе мобилизацилеме хушас, çав шутпа çак ĕçсене туса ирттермелле:

а) уйхирте юр тытас ĕç мĕнле пынине районсем тăрăх, районсенче вара колхозсемпе совхозсем тăрăх тĕрĕслесе тухмалла, çав ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе çĕнĕрен тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла;

б) колхозсемпе совхозсен уйхирĕсенче çуркуннехи юр шывне тытса хăварас ĕçе анлăн организацилемелле;

в) кĕрхи çĕртме, хура çĕртме тунă пусăсене, çавăн пекех тата пропашной культурăсем пулнă участоксене, кĕркунне сухаласа хăварман вырăнсене, 1—2 хут сÿрелесе тухмалла, çапла вара тăпрари нÿрлĕхе сыхлама ун çиелти сийне 1—2 сантиметр тарăнăш кăпкалатмалла.

Çуркунне сухаламалли, çавăн пекех çĕртме тумалли участоксенче те нÿрлĕх тытса хăварма çуркуннен малтанхи кунĕсенче лущильникпе 1—2 хутчен 3—5 сантиметр тарăнăш кăпкалатса хăвармалла.

Тăпрара нÿрлĕх сыхласа хăварассишĕн тата çумкурăксене пĕтерессишĕн кĕрешессишĕн вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре чи кирлĕ мероприятисенчен пĕри пулса тăнине шута илсе, тăпра типсе пынă май нÿрлĕхе тытса хăварас ĕçре мĕнпур пек тракторсемпе тата чĕрĕ туртăм вăйĕпе усă курмалла;

г) колхозсемпе МТС-сенче тата совхозсенче тракторсемпе тата лашасемпе ĕçлемелли анлăн сухалакан орудисене (лущильниксене, дисклă сÿресене, тулă акмалли плугсене, культиваторсене, драпачсене, вăрăм, тимĕр шăллă йывăç сÿресене тата ыттисене те) вăхăтра юсамалла, вырăнти промышленность предприятийĕсене, МТС-семпе МТМ-сене, совхозсене тата колхозсенчи тимĕрçĕсене çĕре кăпкалатмалли çăмăл хатĕрсене юсас тата çĕнĕрен тăвас тĕлĕшпе заданисем памалла;

д) тымарлă çумкурăксем (пиçен, хăях тата ытти те) нумай ÿсекен уйсене çуркунне чи малтан тата кирлĕ пек тарăн сухаламалла. Малтан кăпкалатса çемçетнĕ уйсене, вĕсенче тымарлă çумкурăксем ÿсмеççĕ пулсан, пĕр çул хушши ÿсекен çумкурăксем (сÿсен-хир сĕлли тата ытти те) шăтма ĕлкĕрнĕ пулсан, тырăсем акас ĕçе хăвăртлатас шутпа, 10—12 сантиметр тарăнăш, лайăх çаврăнса пăрахтарса сухалама ирĕк парас. Çав уйсене сухаланă хыççăнах сÿрелемелле. Анчах тăпрана малтан кăпкалатса çемçетмесĕр 10—12 сантиметр тарăнăш çеç сухалама чарас;

е) типĕ çанталăк тăракан районсенчи колхозсемпе совхозсене хăйсен вăйĕсемпе çырмасене, пĕчĕк варсемпе юханшывсене пĕвелесе, кивĕ пĕвесене юсаса шыв тытмалла тума сĕнес, май килнĕ çĕрте кашни колхозрах çĕрулми, пахча-çимĕçсемпе ытти тĕрлĕ ялхуçалăх культурисем акма шăварса тăракан страховой участоксем 5—15 гектар чухлĕ уйăрма сĕнес, пĕвесем тăвас тĕлĕшпе районсемпе колхозсене конкретнăй заданисем парас.

3. Советпа парти тата çĕрĕç органĕсене çапла тума хушас.

а) кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи районсенче, çавăн пекех типĕ тата çурма типĕ çанталăк тăракан районсенче, Çĕпĕрпе Уралти тата Казах ССР-ĕн çурçĕр облаçĕсенчи çурма типĕ çанталăк тăракан районсемсĕр пусне, кĕрхи çĕртме тунă çĕрте уйрăм участоксенче, тăпра пулса пынă май, тырăсем акма çĕр хатĕрлеме тата акма тытăнмалла. Тырăсем акнă чухне суха тăвассипе сÿрелес ĕçсене пĕр вăхăтрах тумалла, çавăн пекех çурхи тулă тата ытти ир акмалли культурăсене акассине те кая хăвармалла мар. Çак ĕçсене тунипе пĕрлех, малтан нÿрĕ ытлашши пулнă пирки нÿрлĕх тытас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене тăвайман участоксенче те çĕре кăпкалатмалла;

б) Çĕпĕрпе Уралти тата Казахстанăн çурçĕр облаçĕсенчи çурма типĕ çанталăк тăракан районсенче, апрель уйăхĕнче кĕрхи çĕртме тунă çĕр çинчи нÿрлĕхе мĕнле те пулин ытларах сыхласа хăварас тесе, май килнĕ таран ытларах сухалама тата сÿрелеме тăрăшмалла, май уйăхĕнче сухаламалли участоксем çинче нÿрлĕхе витсе хăвармалла. Çурхи тулла, чи малтан кая юлса акмалли тулла, апрелĕн юлашки кунĕсенче акма тытăнса майăн 15—20-мĕшĕ тĕлне акса пĕтермелле. Асăннă районсенче сĕлĕ акма майăн иккĕмĕш вунăкунлăхĕнче тытăнмалла.

Асăннă районсенче сÿсен, хăй тĕллĕн ÿсекен кантăр, армути тата ытти çумкурăксем ÿсекен участоксене çуркунне кăпкалатса çемçетнĕ хыççăн, май уйăхĕнче çумкурăкĕсем шăтса тухсан, çиеленчех сухаламалла та акса хăвармалла.

Тымарлă тата тымартан саралакан çумкурăксем ÿсекен участоксене çуркунне пуринчен малтан тивĕçлĕ пек тарăн сухаласа хăвармалла;

в) Çĕпĕр, Урал тата Çурçĕр Казахстан районĕсенче кая юлса акнă культурăсем пиçсе ĕлкĕрейменнине е тата сивĕпе сиенленессине шута илсе, çуракине июнĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр пĕтĕмĕшпех вĕçлемелле.

4. Кĕрхи тырăсен калчисене çуркуннехи тапхăрта пăхассине: калчасене сÿрелессине, вĕсене апатлантарассине, çавăн пекех çум çумлассине вăхăтра туса ирттермелле, çав ĕçсене çураки ирттермелли ĕç планĕсене кĕртмелле.

Çĕпĕрпе Çурçĕр Казахстанăн çĕçенхирлĕ районĕсенче, тăпрари нÿрлĕхе çил вĕрсе типĕтес хăрушлăх пур çĕрте, хăмăл çине акнă кĕрхи тырăсен калчисене сÿрелемелле мар, анчах кĕрхи тырăсене çуркунне çумкурăксенчен, уйрăмах армутинчен, тасатмалла.

5. Тырă калчисене, уйрăмах пропашной культурăсене, пăхса çитĕнтерес ĕç çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла, çум çумлас тата ретсем хушшинче кăпкалатса çемçетес ĕçсене туса ирттерме колхозсемпе совхозсене хуласемпе район центрĕсенчен ĕçе юрăхлă çынсене тата çамрăксене ярса пулăшас.

6. Удобренисемпе май килнĕ таран ытларах усă курас шутпа, республикăсемпе крайсенчи, облаçсемпе районсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсене çапла тума хушас:

а) кашни колхоза 1945 çулта уйхирсене вырăнти удобренисем тăкмалли план памалла, çав планра удобрени тăкса çемçетмелли çĕр лаптăкне кăтартса памалла, тислĕкпе, çĕрĕк тăприпе, тислĕк шĕвекĕпе, кĕлпе, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе тата ытти тĕрлĕ удобренисемпе туллин усă курассине тата вĕсене пуринчен малтан техникăллă культурăсемпе пахча-çимĕçсем акмалли, çĕрулми лартмалли участоксене, тĕштырă культурисен вăрлăх участокĕсене, çавăн пекех кĕрхи тырăсем акмалли вырăнсене тăкассине палăртмалла;

б) торфлă вырăнсенче вырнаçса тăракан колхозсенче торфпа çĕре çемçетнĕ çĕрте анлăн усă курмалла, торфа тислĕкпе, тислĕк шĕвекĕпе, фекалипе тата ытти тĕрлĕ удобренисемпе хутăштарса компост тăвассине организацилемелле;

в) промышленноçри тата хуласенчи тĕрлĕ каяшсемпе çĕре çемçетнĕ çĕрте усă курассине организацилемелле, колхозсене çав удобренисене турттарас ĕçре хула транспорчĕпе пулăшмалла;

г) Сельхозснабăн склачĕсенчен, станцисемпе пристаньсенчен минераллă удобренисем турттарса тухмалла, вĕсемпе пуринчен малтан техникăллă культурăсем акмалли вырăнсенче тата шăваракан çĕрсем çинче усă курмалла.

7. СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, советпа парти тата çĕрĕç органĕсене çураки пуçланиччен кашни колхозра кашни уйрăм культура енĕпе палăртнă чухлĕ вăрлăх участокĕсем уйăрса хăварассине тата çав участоксене уйрăм звеносем çумне çирĕплетессине, уйăрнă вăрлăх участокĕсем çинче агротехникăна туллин пурнăçа кĕртессине организацилеме хушас: чи лайăх сортлă вăрлăхсене кĕрхи çĕртме тунă е çĕртме тунă çĕр çине, агротехника кăтартнă чи паха срокçенче акса хăвармалла, çавăн пекех тата вăрлăх участокĕсенчи тырпула кирлĕ пек лайăх пăхса çитĕнтермелле, уйăрнă вăрлăх участокĕсене актсем çырса çирĕплетмелле.

Колхозсенчи вăрлăх участокĕсене тĕрĕс уйăрас тата вĕсем çинче агротехника правилисене çирĕп тытса пырас ĕçĕн ответлăхне райçĕрĕç пайĕсенчи агроном-семеноводсемпе колхоз председателĕсем çине хурас.

8. 1945 çулта пусуçаврăнăшсем пур колхозсенче пуринче те пусăсен чиккисене тата çав чикĕсене лартнă паллăсене вырăна туса тĕрĕслемелле, йышăннă пусуçаврăнăше тăрăх тĕрлĕ культурăсене мĕнле вырнаçтарса тухнине тĕрĕслесе тухмалла.

Пусуçаврăнăшне туман тата пусуçаврăнăшĕ тумалли план çук е тата 1944 çулта тырпулсене çав йышăннă пусуçаврăнăшĕ тăрăх вырнаçтарса тухман колхозсенче пусуçаврăнăшне пуçарса ямалли планĕсене çĕнĕрен тумалла е тĕрĕслесе тÿрлетмелле, çавăн пекех тата пусăсем хушшинчи чикĕсене сухаласа пăрахнă е çав чикĕсем çинчи паллăсене пĕтерне пулсан, вĕсене юсаса йĕркелемелле.

9. Пусуçаврăнăшсене хăвăртрах туса йĕркелес шутпа, Вильямс академик пусуçаврăнăшĕсенче пĕрçа йышши курăксем тата нумай çул хушши ÿсекен курăксем акма сĕннĕ меслетпе анлăн усă курас шутпа, 1945 çултан пуçласа кашни колхозпа совхозрах нумай çул хушши ÿсекен курăксене вăрлăхлăх акас ĕçе тытăнмалла, çак ĕçе çна колхозсемпе совхозсем пусуçаврăнăшĕсенче акма тивĕçлĕ курăксене çывăхри ик-виçĕ çул хушшинче хăйсен вăрлăхĕсемпех акма тытăнма пултарччăр тесе пурнăçламалла. Нумай çул хушши ÿсекен курăксем акса тăвас çĕрĕн агротехникине вĕрентсе алла илес, çав курăксене акса тухăçлă утă тата вăрлăх туса илес, пусуçаврăнăшĕсене хăвăртрах йĕркелес ĕçре колхозсене агротехникăллă пулăшу памалла. 1945 çулта колхозсемпе совхозсенче нумай çул хушши ÿсекен курăксем акнă çĕр лаптăкĕнчен вăрлăх туса илме юрăхлă чи лайăх участоксене уйăрмалла, çав участоксене кирлĕ пек пăхса тăмалла, вăрлăх валли вырăнти чи тухăçлăрах пулакан тата хĕле çирĕп тÿссе ирттерме пултаракан курăксен сорчĕсене палăртса уйăрасси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

10. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ республикăсен Совнаркомĕсем, крайисполкомсемпе облисполкомсем, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсем, парти Обкомĕсемпе крайкомĕсем умне çак тĕп задачăна лартаççĕ: кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи, Уралпа Казахстанри тата Çĕпĕрти районсенче çурхи тулă акакан çĕрлаптăкĕсене тата унăн тухăçлăхне чи кĕске срокçенче вăрçăччĕнхи виçене çитермелле, 1945 çулта çурхи тулă акма тунă плана пĕр пăрахланмасăр пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе кирлĕ мерăсене пурне те йышăнмалла.

11. Çурхи тулă акса тăвас ĕçе хăвăртрах йĕркелесе ярас шутпа, Куйбышев, Пенза, Саратов, Сталинград, Тамбов, Ульяновск, Кемерово, Курган, Ново-Сибирск, Омск, Томск, Тюмень, Иркутск, Молотов, Челябинск, Чита, Чкалов облаçĕсенче, Алтай, Хабаровск, Красноярск крайĕсенче, Башкир, Тутар АССР-ĕсенче, Казах ССР-ĕнче колхозсене 1945 çулта тĕрĕссипе акакан çурхи тулăн пĕтĕм çĕр лаптăкĕнчен вăрлăхлăх çурхи тулă акмалли участоксене 20 процент чухлĕ ÿстерсе уйăрса илме ирĕк парас.

12. Çапла йĕрке тăвас: çурхи тулла, пуринчен малтан, çерĕмлĕ е нумай çул хушши сухаламасăр выртнă çĕрсене çĕртме е кĕрхи çĕртме туса акмалла, нумай çул хушши ÿсекен курăксем пулнă участоксем çине кĕрхи çĕртме туса акмалла, çавăн пекех тата çĕртме туса акнă кĕрхи тырăсем пулнă вырăнсене акмалла.

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне, крайисполкомсемпе облисполкомсене тата республикăсен Совнаркомĕсене çывăхри 2—3 çул хушшинче колхозсемпе совхозсенче çурхи тулла кĕрхи çĕртме тата çĕртме тунă вырăнсене акма тытăнмалла тума хушас.

Çапла йĕрке тăвас: хĕвелтухăçĕнчи районсенче кĕрхи культурăсемпе çурхи тулă акмалли çĕрсем çинче çĕртме тăвас ĕçе çураки вĕçленсе пынă май тытăнмалла та çав ĕçе июлĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр туса пĕтермелле.

Республикăсен Совнаркомĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене тата МТС-сен директорĕсене çапла тума хушас: чĕрĕ туртăм вăйĕпе тракторсем çураки ĕçĕнчен пушанса пынă май, вĕсене кирлĕ таран çĕртме тунă çĕре куçарса пымалла, çакна ăна çĕртме тăвас ĕçе палăртнă срокçенче вĕçлес шутпа тумалла.

13. Хуратул тухăçлăхне ÿстерес шутпа, вырăнти советпа парти тата çĕрĕç органĕсене çапла тума хушас: хуратул акма уйăракан участоксенче ака умĕнхи ĕçсене тĕрĕс туса ирттересси çине, нÿрлĕх тытас шутпа кĕрхи çĕртме пуссине иртерех сÿрелесе культиваци туса хăварасси çине тата хуратул акас умĕн çĕнĕрен культиваци туса çумкурăксене пĕтересси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Хуратул калчине çуркуннепе çуллахи лайăх мар пулма пултаракан çанталăкпа нумай сиенленессинчен сыхласа хăварас тесе, колхозсене хуратула ик-виçĕ срокра акма сĕнес. Колхозсенче пылхурчĕсен вĕллисене хуратул акнă вырăнсем çине ытларах илсе тухмалла тăвас.

## IV.
## ÇĔРМАМĂК ТУХАÇЛĂХНЕ ÜСТЕРМЕЛЛИ МЕРАСЕМ ÇИНЧЕН

1. Çĕрмамăк тухăçлăхне ÿстерес ĕçре çулталăк тăршшĕпех тăвакан ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхĕ питĕ пысăк вырăн йышăннине шута илсе, çĕрмамăкĕ акакан районсенчи совет, парти тата çĕрĕç органĕсене агротехникăллă çак мероприятисене пурнăçа кĕртме хушас:

а) çĕрмамăкĕ акма уйăрнă уйсене, унта çĕртме сухи туман пулсан, çуркунне икĕ хут сухаламалла, çĕртме сухи тунă уйсене—çуркунне тепĕр хут сухаламалла, ун хыççăн хытнă тăпрана кăпкалатмалла;

б) çĕрмамăкĕ акмалли пĕтĕм çĕр лаптăкĕн 80 процентне таран трактор çумне кăкарса ĕçлемелли сеялкăсемпе акмалла, çав çĕре пĕтĕмпех тракторпа культиваци тумалла, çĕрмамăкĕ акнă çĕрĕн 40 процентĕнчен кая мар тракторпа е лашапа ĕçлемелли машинăсемпе кăпкалатмалла;

в) çĕрмамăкĕ акнă пĕтĕм лаптăк çинче çĕрмамăкне вăхăтра тата лайăх сайралатса тухмалла: тăпра пахалăхне кура, кашни гектар çинче 75—100 пин ÿсен-тăрантан кая пулмалла мар;

г) çĕрмамăкĕ ÿснĕ вăхăтра çĕрмамăкĕ акнă участоксене 4 хут катмакпа çемçетмелле, 5 хутран кая мар тарăн культиваци тумалла;

д) çĕрмамăкĕ ÿснĕ вăхăтра ăна çирĕплетнĕ нормăсем тăрăх йăрансемпе шыв ярса çеç шăвармалла, шăварнă хыççăн тăпра типсе ан кайтăр тесе, тăпра пиçсе çитнĕ вăхăтра йăрансем хушшине çемçетсе тухмалла, çĕрмамăкĕ акнă çĕр ялан вăтам нÿрлĕхлĕ тата çемçе тăтăр.

Çĕрмамăкĕ акнă лаптăка пĕтĕмпех шыв илтерессине пĕтерсе лартмалла. Шăварма кирлĕ шыва перекетлес тесе, шăваракан çĕрсене вăхăтра уйăрса хумалла;

е) 1945 çулхи кĕркунне çĕрмамăкĕ акмалли пĕтĕм лаптăк çинче тарăн (25 сантиметртан ăшăх мар) кĕрхи çĕртме туса ирттермелле.

Союзлă республикăсен Совнаркомĕсем ыйтсан, кирлĕ чухне вĕсене çĕрмамăкĕ акмалли çĕре çуркунне сухалама, çавăн пекех тата кĕрхи çĕртмене виçĕ корпуслă плугсем вырăнне икĕ корпуслисемпе сухалама, çавăн пирки вара горючие 20 процент ытларах расходлама ирĕк пама СССР Наркомземне право парас.

2. Узбек ССР-ĕпе Туркмен ССР-ĕн Совнаркомĕсене Узбек ССР-ĕн Хорезм облаçĕпе Кара-Калпак АССР-ĕнчи районсенче тата Туркмен ССР-ĕнчи Ташауз облаçĕнчи районĕсенче люцерна вăрлăхĕ акса тăвас ĕçе çĕнĕрен пуçласа яма хушас.

3. Шăваракан çĕрсене мелиораци тĕлĕшĕнчен лайăхлатас тесе, вĕсене çÿп-çапсемпе тулса ларма тата шурлăхланма парас мар тесе, шăвармалли хатĕрсемпе тĕрĕс усă курас тата шăваракан çĕрсемпе ытларах усă курас тесе, республикăсен Совнаркомĕсене тата крайсемпе облаçсен исполкомĕсене çакăн пек ĕçсем туса ирттерме хушас:

а) уйсене шăварма пуçличчен — шăвармалли хатĕрсене тасатса, юсаса хумалла тата гидротехника сооруженийĕсене юсамалла;

б) тăпра условийĕсене, агротехникăна тата тырпул тухăçлăхне шута илсе, ялхуçалăх культурисене шăвармалли нормăсемпе срокçене апрелĕн 1-мĕшĕччен çирĕплетмелле. Тăпра айĕнчи шыв тарăх выртакан районсенче шăвармалли нормăсене тепĕр хут пăхса тухса чакармалла, çирĕплетнĕ нормăсене пурнăçа кĕртсе пынине питĕ хытă тĕрĕслесе тăмалла;

в) тĕрлĕ районсене тата тĕрлĕ колхозсене нормăсем тăрăх шыв валеççе памалли плансене 1945 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕччен çырса хатĕрлесе çирĕплетмелле; çĕрĕç органĕсен шыв хуçалăхĕн органĕсемпе пĕрле 1945 çулхи апрелĕн 15-мĕшĕччен кая юлмасăр кашни колхозăн тата совхозăн шывпа усă курмалли планĕсене çирĕплетмелле;

г) шыва каналсенчен нормăсем тăрăх парса тăмалла, вăл нормăсене шывпа усă курмалли плансем тăрăх тумалла, планĕсене шăвармалли хатĕрсенче шыв мĕн чухлине шута илсе тата шăваракан çĕрсем мелиораци енчен мĕнле шутра тăнине шута илсе çирĕплетмелле.

4. СССР Наркомземĕпе СССР Госпланĕн Центральный Статистика Управленине çапла тума хушас:

а) 1945 çулта шăваракан çĕрсене тата вĕсемпе ялхуçалăхĕнче мĕнле усă курнине шута илес ĕçе организацилемелле;

б) 1945 çултан пуçласа, çĕрсене шăварни тата ĕçлесе тăни çинчен, шăвармалли хатĕрсене тасатни тата çав ĕçри сооруженисене юсани çинчен отчет парса тăмалла тăвас.

## V.
## САХĂР КĂШМАНĔН ТУХАÇЛĂХНЕ ÜСТЕРМЕЛЛИ МЕРАСЕМ ÇИНЧЕН

Сахăр кăшманĕ акакан районсенчи совет, парти тата çĕрĕç органĕсен чи пысăк задачисенчен пĕри—сахăр кăшманĕн тухăçлăхне ÿстересси тата унăн агротехникине лайăхлатасси пулса тăрать тесе шутлас. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ республикăсен Совнаркомĕсене, крайсемпе облаçсен исполкомĕсене, коммунистсен партийĕсен Центральный Комитечĕсене тата ВКП(б) крайкомĕсемпе обкомĕсене çак ĕçсене пурнăçа кĕртме хушаççĕ:

1. Сахăр заводĕсем валли акакан сахăр кăшманне сахăр завочĕсенчен тата сахăр кăшманĕ илекен пунктсенчен 15 километртан аякра акмалла мар, сайра хутра çеç ăна çав пунктсенчен 20—25 километр таран инçере акма юрать, сахăр кăшманĕ акакан колхозсене вара нумай ĕçлеттерекен ытти культурăсем ытлашши актармалла мар.

2. Сахăр кăшманĕ акма çумкурăксăр чи лайăх участоксене, пуринчен ытларах çĕртмере тислĕк тăкса çемçетнĕ участоксене уйăрса хумалла. Сахăр кăшманне, ялан тенĕ пекех, кĕрхи çĕртме тунă çĕр çине акмалла, кĕрхи çĕртме тунă çĕр çитмест пулсан, çуркунне иртерех тата 20 сантиметртан ăшăх мар сухаланă çĕр çине акмалла.

3. Сахăр кăшманне вăхăтра акмалла, çавăн пекех тата кăпкалатса тасатнă хыççăн 10 кун хушшинче сайралатса тухмалла. Шăваракан çĕр çине акнă сахăр кăшманне ÿснĕ вăхăтра 5—7 хутчен шăвармалла, кашни шăвармассеренех ретсем хушшине обязательнăй йĕркепе çемçетсе тухмалла.

4. Çуракине тухиччен кашни колхозрах вырăнти удобренисем (тислĕк, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ) çителĕклĕ хатĕрлемелле те вĕсене сахăр кăшманĕ акмалли участоксене турттарса тухмалла, çавăн пекех тата сахăр кăшманĕ акмалли çĕрсене çĕнетмешкĕн минераллă удобренисемпе усă курмалла.

## VI.
## ÇУ КУЛЬТУРИСЕН ТУХАÇЛĂХНЕ ÜСТЕРМЕЛЛИ МЕРАСЕМ ÇИНЧЕН

1. Çу культурисен (çу кăлармалли культурăсен) тухăçлăхне ÿстерес тесе, республикăсен Совнаркомĕсене тата облаçсемпе крайсен исполкомĕсене çапла тума хушас:

а) тĕрлĕ районсенче тата колхозсенче çу культурисем мĕн чухлĕ акмаллине кăтартса памалла, çав районсемпе колхозсене вара нумай ĕçлеттерекен ытти техникăллă культурăсем ытла актармалла мар; çу культурисене кĕрхи çĕртме тунă çĕр çине акмалла, кĕрхи çĕртме тунă çĕр çитмест пулсан—çуркунне лайăх сухаланă çĕр çине акмалла;

б) çу культурисене агротехника енчен чи лайăх вăхăтра акмалла, хĕвелçаврăнăш, клещевина тата ытти çу культурисем акнă йăрансем хушшине çемçетмелле;

в) çуракине тухиччен бригадăсенче çу культурисем акас ĕçе уйрăм звеносене хушмалла, çу культурисене пăхма звенои уйрăм членĕсене уйăрмалла.

2. СССР Наркомземне çапла тума хушас:

а) нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенче пуринчен те 1945 çулта селекципе сăнав станцийĕсенче тата райсемхозсенче çу культурисен пахалăхне ÿстерес тата вĕсен вăрлăхне хатĕрлес ĕçе çĕнĕрен пуçласа ямалла, Совет Союзĕнчи ытти районсенчи селекципе сăнав станцийĕсенче, райсемхозсенче çу культурисен лайăх йышши вăрлăхĕсене акса тăвас ĕçе сармалла;

б) çу ытларах паракан хĕвелçаврăнăшăн çĕнĕ сорчĕсене, çавăн пекех тата горчицăн, кудряш йĕтĕнĕн тата ытти çу культурисен тухăçлăрах çĕнĕ сорчĕсене ытларах акса ÿстермелле.

3. Çу культурисем нумайрах акса ÿстерес тĕлĕшпе колхозсемпе колхозниксене ытларах хавхалантарас тесе, çапла тăвас:

а) СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн 1940 çулхи майăн 17-мĕшĕнче йышăннă 804-мĕш номерлĕ постановленийĕн 8-мĕш пунктĕнче калани горчица, соя, перилла, мăкăнь, арахис тата ляллеманци тĕлĕшпе те калас, урăхла каласан—колхозсенчен государствăна обязательнăй йĕркепе памалли тырă шучĕпе горчица, соя, перилла, мăкăнь, арахис тата ляллеманци вăррисене те илмелле тăвас, вĕсен пĕр центнерне 2 центнер тĕштырă шучĕпе илмелле.

Государствăна обязательнăй йĕркепе тырă парса татнă хыççăн колхозсене вĕсем обязательнăй тата контрактаци йĕркипе панă горчица, соя, перилла, мăкăнь, арахис тата ляллеманци вăрлăхĕн кашни центнерĕшĕн, Заготзерно пунктĕсенчен 2 центнер тĕштырă памалла;

б) обязательнăй йĕркепе паракан çу вăрришĕн колхозсене çупа турантă памалли нормăсене, 1945 çултан пуçласа, колхозсен натуроплата шучĕпе МТС-сене паракан çу вăрри тĕлĕшпе те çирĕплетмелле.

4. СССР Наркомпищепромне 1945 çулта çу культурисем акса тăвакан колхозсене вăрçăччен агрономи енчен пулăшса тăнă пунктсене çĕнĕрен йĕркелеме хушас.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата ВКП(б) Центральный Комитечĕ çапла шутлаççĕ: 1945 çулта ялхуçалăхне малалла аталантармалли плана пурнăçа кĕртни —Хĕрлĕ Çарпа халăха апат-çимĕç, промышленноçа чĕртавар парса тăрас ĕçре совет тата парти организацийĕсен, çĕрĕç органĕсен, колхозсен, МТС-семпе совхозсен, коммунистсемпе комсомолецсен, агрономсен, колхозниксемпе колхозницăсен, рабочисемпе служащисен вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен тумалли чи паха задачи пулса тăрать.

## Канадăри пичет Черняховский юлташ çинчен

ОТТАВА, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Монреальре тухакан «Газетт» хаçат арми генералĕ И. Д. Черняховский пирки редакци çырнă статьяра унăн вăрçăри паллă çитĕнĕвĕсене палăртать. Умстатьяра çапла каланă: танксен вăрçине ертсе пыракан çав пултаруллă специалист çĕнĕ Российăна палăртса тăрать. Черняховский ячĕ совет халăхĕн чĕринче тата унăн союзникĕсен чĕринче нумай вăхăт хушши пурăнĕ.

Отв. редактор заместителĕ
А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпа секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—25.

НТ 00531 Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000